ЧР Ял хуçалăх министерствипе патшалăх ветеринари службин районти кунĕнчен

# Пурнăç çапла ыйтать: "Кашни ĕçĕн вăхăчĕ пур"

Кая юлсан вара каю шăтнине ĕçри çын курса-пĕлсех тăрать те çакна шута илсе пирĕнтен кашниех ĕç-пуçа ырана хăвармасăр пурнăçлама тăрăшать. Ял хуçалăхĕнче ку чăнлăх уйрăмах уççăн курăнать. Хресченĕн



**Владимир Карлович Тихоновпа районти ветслужба ертӳçин Николай Семенович Яковлевăн сӳтсе явмалли ыйтусем хирте те çук мар.**

пĕтĕм ял хуçалăх çулĕ унпа сыхăннă. Хĕлле çур акине тĕплĕ хатĕрлентĕн – акана агротехника срокĕнче ирттертĕн, вăхăтра акрăн – тыр-пула пиçме çителĕклĕ услови туса патăн, вырма ĕçĕсене наука ыйтнă пек хатĕрленсе вăхăтра тухрăн – çĕн çăкăра хире хăвармарăн, алăра çăкăр пур – социаллă пурнăçпа экономика малалла кайрĕ. Çак çыхăнăва курса-пĕлсе тăрса сентябрĕн 20-мĕшĕнче районта ирттернĕ ЧР Ял хуçалăх министерствипе патшалăх ветеринари службин кунĕнче Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳçи Владимир Карлович Тихонов хăй ертсе пыракан ушкăнпа Ленин ячĕпе хисепленекен, "Чемеево" ял хуçалăх производство кооперативĕсенче пулса вырăнти ĕçченсемпе, Тойкилтĕри, Нискассинчи, Юнкăри вăтам шкулсенчи учительсен коллективĕсемпе тĕл пулсан, ун çинчен районти тата республикăри тĕслĕхсемпе усăмлă ăнлантарса пачĕ. Тĕрĕс ăнлантарăва кура вырăнсенчи тĕл пулусем те ĕçлĕ калаçура иртрĕç.

– Пирĕн пурнăçра пĕр çивĕч ыйтăва та уйрăммăн татса пама çук, мĕншĕн тесен вĕсем вăл е ку енпе пурпĕрех пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ. Вĕсене халăх майлă татса парас тĕллевпе хăйсен ĕçĕнче малта пыракан технологисемпе усă курма хавхалантармалла. Манмалла мар, ял хуçалăхĕпе сывлăх, вĕрентӳпе строительство ыйтăвĕсене тĕпе хунă наци проекчĕсем пĕр çыхăра пулмалла. Эпир çакна тума пултарсан, ялсенче çулсемпе таса шыв та, малашлăха ырă ĕмĕтпе ăнтăлакан ачасем те, ĕç хыççăн канмалли условисемпе пурăнмалли хăтлă çурт-йĕр те пулĕç,– терĕ хăйĕн калаçăвĕнче Владимир Карлович Тихонов.

Унпа килĕшекенсем "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин пуçарăвĕсемпе килĕшнине, влаç ял тата пĕтĕм общество çине малашлăх туйăмĕпе пăхма пуçлани çынсен шухăш-кăмăлĕнче çĕнĕлĕхсем тымарлантарнине палăртрĕç. Анчах эреветлĕ-теветлĕ пурнăç çулĕ такăр мар-ха. Ял çыннисен аталанăвĕн çулĕ çинчи нумай ыйтăвĕсем çак кун министерство специалисчĕсем



**Министерство кунне ирттерекенсем ыйтусем çине тулли хуравсем пачĕç.**

Раççей Президенчĕ В. Путин çулталăк каялла наци проекчĕсене ĕçлеттерме çул уçрĕ. Вĕсен шутĕнче "Ял хуçалăхне аталантарасси" проект пулни çĕршыв ертӳçисем хресчен пурнăçĕпе те кăсăкланнине кăтартса парать. Çак проект ял çыннисен шухăшлавне урăхла йĕркелеме, вĕсене умне тухрĕç. Вĕсем хушшинче В. Тихоновсăр пуçне ЧР Ял хуçалăх министерствин бухучетпа ревизи ĕç пайĕн пуçлăхĕ С. Максимова, правăпа тивĕçтерекен пай ертӳçи А. Филимонов, райадминистрацин организаципе кадр тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Л. Тарасова пулчĕç.

Хорнуйсемпе Мăн Шаптаксене ялсенчи çул ыйтăвĕ канăç памасть. Хорнуйсемшĕн шкул ыйтăвĕ те кун йĕркинчен тухман-ха. Паян, авă, Ленин яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн çĕр улми пуссинче Тойкилтĕри вăтам шкул ачисем ĕçлеççĕ.

"Чемеево" пĕрлешӳллĕ хуçалăхра вара çумăрсене пула пур ĕçсем те пĕр вăхăта килсе тухнăран уй-хир ĕçченĕсемпе пĕр ушкăна пухăнса калаçма май килмерĕ. Çав вăхăтрах юлнă пысăках мар хирсенче "хир карапĕсем" вырма вĕçлессипе тимлеççĕ, ака агрегачĕсем юлашки гектарсем çинче кĕрхи культурăсем акаççĕ, инçех те мар дизель тракторсем çĕртме сухи тăваççĕ, кашни килтех ял çыннисем çĕр улми кăлараççĕ.

Нискассинчи тата Юнкăри вăтам шкулсенче пулсан, унти вĕрентекенсене ялăн паянхи кунĕпе малашлăхĕ самай хумхантарни курăнчĕ. Ыйтусем çаксем:

**Çул тăватпăр, пӳрт çĕклетпĕр, шывĕ вара хăçан? (Юнкă)**

**– Газшăн çынсенчен пуçтарнă укçа каялла килмерĕ. Колхоз пĕтрĕ те вăл та унпа пĕрле çĕтрĕ-ши?**



**Министерство ĕçченĕсемпе тĕл пулăва кашни çĕртех халăх йышлă пухăнчĕ.**



**Пурнăçпа тан пырас тесен кашниййĕнех ыйтусем пур.**

**– Хăшпĕр ашшĕ-амăшĕсем укçа-тенкĕллех пулманран тата хăшĕсем эрех-сăрапа туслăран айăпсăр ачисем шкулта кăнтăрлахи вĕри апата та укçа парса çиейменрен çакăнта дотациллĕ апатланăва ĕçе кĕртме май çук-ши? (Нискасси).**

**– Шыв проблеми вуншар çул пырать. Мĕн тумалла? (Юнкă)**

**– Явăльняра 2-3 çул каялла шыв çукран "алă çупсах" кил-çурта çунтарса ятăмăр. Вăхăт иртрĕ, анчах шыв лавĕ вырăнтан хускалмарĕ. Мĕншĕн?**

**– Явăльняра шыв проблеми 5 çул тăрать. Ĕçмелли таса шывпа тивĕçтерессипирки калаçнă вăхăтра эпир мĕнле шыв ĕçсе пурăннине кам пĕлет?**

**– Юнкăра районти пĕр вăтам шкулта çеç спорт залĕ çук. Шкулти 230 вĕренекен хăçанччен спорт залĕсĕр юлĕç-ши?**

Çапла, ыйтусем, ыйтусем, ыйтусем... Шăпах çак ыйтусем вырăнсенче кашни ĕçе вăхăтра пурнăçламалли, малаллахи ĕçсене пурнăçланă чух кая хăварни каю шăтарни пирки калаççĕ те ял тăрăхĕсен администрацийĕсем умне çĕнĕ тĕллевсем лартаççĕ..

Паян Чăваш Енре ялсем тата унти социаллă объектсем патне асфальт çулсем çитересси пирки ĕçсем пыраççĕ. Республикăра çывăхри икĕ çул хушшинче çак ĕçсене пысăк лаптăк çинче пурнăçлама шантараççĕ. Пуш сăмах мар çакă. Ăна ЧР Президенчĕ Н. Федоров республикăна газификацилесси пирки программăна çул парсан, вăл палăртнă вăхăтрах пурнăçланни çирĕплетет. Апла пулсан çул ыйтăвĕ пурнăçланасси пирки те иккĕленӳ пулмалла мар. Умра пĕр тĕллев кăна: ĕçлемелле, ĕçлемелле тата ĕçлемелле, çĕнĕ шухăшлава пĕр саслă пулса пурнăçа кĕртмелле, çавна валли ялсене тирпейлессине ыранхи куна хăвармалла мар.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Санăн çыннусем, район

# Ашшĕ ятне çĕре ӳкермест



Чăн арçынăн пурнăçра йывăç лартмалла, çемье çавăрмалла, ача пăхса ӳстермелле, тет халăхăмăр ăс-хакăлĕ. Пурнăç вĕçне çитсен каялла çаврăнса пăхсан куççуль кăлармалла ан пултăр тесе пурнан пурнăçра кашниех çак тĕрĕслĕхе пурнăçлама тăрăшать. Ăна пурнăçа кĕртессипе шăл çыртса ĕçлекенсен йышне кĕрет те ĕнтĕ Кашмашра çуралса ӳснĕ, ĕç ĕмĕрне çĕр ĕçĕнче ирттернĕ Геннадий Алексеевич Алексеев. Шанса панă кашни ĕçрех ăсталăх кăтартаканскер, ывăлĕсене те ĕçе юратма вĕрентсе ӳстернĕ. Паян вара вăл ӳстернĕ çимĕç "Свобода" хуçалăх илемĕ, мал туртăмĕ. Сăмах ăста механизатор, столяр-платник тата тимĕрçĕн ывăлĕ Алексей пирки пырать.

Алексей Геннадьевич **(сăн ӳкерчĕкре)** шкул пĕтерсен тăван ялтан аяккалла каясси пирки шутламан та. Ачаранах ашшĕ техника таврашĕнче ĕçленине курса ӳснĕскер, Алеша та çул çитсе пынă май чунĕпе тракторист пулса пиçсе çитет. Çапла вара 1993 çулхи çур аки валли мал туртăмлă çамрăк тракторист правине алла илет, "Свобода" хуçалăха таврăнса хăйĕн ĕç ĕмĕрĕнчи пĕрремĕш çур акине слесарь пулса хутшăнать. Хăй ĕмĕтне пурнăçлама тĕв тунă çамрăкăн шухăшĕ трактор çинчен каймасть. Ĕçлес кăмăллă çамрăка 1997 çулта комбайнер помощникĕнче ĕçлеме сĕнеççĕ. Хыççăнах трактор та çирĕплетсе параççĕ. Кашни шанăçах тӳрре кăларса пыракан çамрăка пĕлтĕр хуçалăха тин кăна килнĕ ДОН – 1500Б "хир карапĕпе" ĕçлеме шанаççĕ. Çакă тĕрĕс пулнине Алексей кĕрхи ĕçсенче яруççăн кăтартса парать: 1070 тонна тырă çапса тĕшĕлесе районти комбайнерсен ăмăртăвĕнче иккĕмĕш вырăна тухать.

Иртнĕ çулхи хастарлăха Алексей кăçал та алăран вĕçертмест. Район администрацийĕ кĕрхи ĕçсенчи хавхаланăва çĕклеме ирттерекен конкурсра вăл икĕ хутчен ĕнтĕ лайăх ĕçленĕшĕн преми свидетельствисене тивĕçнĕ. Пĕрлехи ĕç кăтартăвĕпе те ашшĕ ĕçне малалла тăсакан çамрăк комбайнер района малтисен ретĕнче.

Мĕнех, ăнăçу пултăр Алексей Геннадьевича малашне те.

**А. ПЕТРОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Вулакан пушар хăрушлăхĕ çинчен

# Вут-кăвар таврашне çывăха ярар мар!



Кӳршĕре пурăнать вак-тĕвек ачапча
Нимĕнрен хăрамасть, итлемест никама.
Асанне тек вăрçать: "Мĕн курас
малашне?"
Лекесрен шикленет вут-кăвар ытамне.
Микула пит пуçтах, час вылять шăрпăкпа.
Асанне каласан, тăрăхлать апăрша.
Ашшĕ-амăш ялан хӳтĕлет ачине:
Ватă çын-мĕн йӳтет çулсем иртнĕ енне.
Шартлама сивĕ хĕл. Раштав уйăх тăрать.
Пит-куçа антăхсах Хĕл Мучи хыпашлать.
Аппăшпе Микула хăрамаç сивĕрен,
Тип сарай тăрринче айкашаç темĕнччен.
Микула кĕсйинчен темĕскер кăларать,
Аппăшне унпалла хăратма шухăшлать.
Йăлтăр! турĕ хĕлхем – вут-кăварăн чĕлхи:
Ик ача хăраса анса тарчĕç хайхи.
Аслисем килте çук, халь кама-ха калас,
Пушара, пушара мĕнпелле сӳнтерес?
Юрпа çеç пенинчен хăрамасть-çке пушар,
Ялкăшса вăй илсех талпăнать вĕт типшар.
... Тип сарай тăрринче типĕ утă çунать,
Вут-кăварăн чĕлхи малаллах тăсăлать.
Кӳршĕри кинемей асăрханă çакна:
Пушара сӳнтерме йыхравланă чанпа.
Вырьăх-чĕрлĕхсене кăлараç витерен,
Шыв йăтаççĕ чупсах ĕнтĕ, ак, килсерен.
Кĕç машина çитет, шыв сапать вут çине,
Кĕл купи пуласран хăтараç витене .
Микулай ăнланчех хăйĕн ăссăр ĕçне,
Ӳлĕмрен вăл манмасть асанне сăмахне:
"Вутпалла ан выля – вăй(ă)ран вăкăр
тухать,
Кил-çурту кĕлленсе кĕл купиййĕ пулать".
Ачапча вăл айван, çавăнпа айхашать,
Анчах ма-ха мăнни инкеке йыхăрать?
Тимлĕхе çухатса пӳртре чĕлĕм туртать,
Шăрпăкне сӳнтермест, урайне пăрахать.
Вут ачи айван мар, васкасах çул хывать,
Çӳп-çапра хăй валли вăл юлташ та
тупать.
Савăнать те ташлать, сиккелет вут-кăвар
Ватă çын, ӳсĕрскер, хăй те пулчĕ кăвар.
Урам урлă пире кинемей пурăнать,
Куç витĕр мар: туян çеç уткалать.
Хăй çавах малалла пурăнма талпăнать,
Юр-варне пĕçерме кăмака та хутать.
Ун мăрйи юсав мар, ăна ватă пĕлет:
Кӳршĕри Петĕре юсамашкăн чĕнет.
Ĕçкĕç Петĕр ĕçе ятшăн çеç пурнăçлать,
Тĕплĕн тунăн ĕçне эрехне вăл ыйтать.
Хĕл сивви те çитет, шартлама шарт!
шаккать,
Ир те каç кинемей халь каланкă хутать.
Пĕринче каçала юсав мар мăрьерен
Вут чĕлхи тулалла талпăнать хирĕнсех.
Ирĕкре вут ачи савăнса чупкалать –
Кивĕ йывăç çуртран кĕл купиййĕ юлать.
Вут аллин чарак çук, кӳршĕне кармашать,
Кӳршĕсен лаççине васкасах ытамлать.
Кӳршĕ-аршă, ял-йыш пушара сӳнтерет,
Анчах кинемей чĕрлес çук каялла...
Тимсĕрлĕх этеме мĕн кăна-ши кӳмест,
Вут-кăвар аллинче миçе çын-ши вилмест?
"Вăрăран çурт юлать, пушартан
кĕл юлать".
Тăвансем, çак йĕрке шутламашкăн
хушать.
Ял-йышпа, кӳршĕпе килĕшсе пурăнар,
Вут-кăвар таврашне çывăха ярар мар!

**Ирина ШАНДИМИРОВА.**